18-22
Чув. N 12
С (чув)
Ю 74

И. И. Юркин.

972

ВĔРЕННĔ СЫНСЕМ.

Хакĕ 35 пус.

СИМБИРСК.
Гипо-литография Совета № 3.
1918.

ВĔРЕННĔ ÇЫНСЕМ.

Епир Ђĕмпĕр те йулашки çулĕ çырăва вĕреннĕ ђухне, пушă вăхăтра, пĕр кĕнекене, ђирсем çинђен çырнăне, вырăслинђен ђăвашла куçартăмăр. Вĕренсе тухсан, çав çулех пире, куçаракан йулташпа иксĕмĕре, кĕнеке тумалли çырусемпе Шупашкара кайма хушрĕçĕ, мĕшĕн тесен, çав кĕнекене малтан вырăсла çыраканни тухтăрĕ унта пурăнат иккен. Йепле куçарнине ăна вуласа кăтартма хушрĕçĕ. Çул каймашкан иксĕмĕре те пире пилĕкшер тенкĕ укçа пађĕçĕ. Епир халиђен Атăлпа çӳремен çынсем, Атăлпа кайма шухăшласа, Атăл хĕррине антăмăр. Парахутсенĕн кантуркисем патне çитсен, хăш парахут çӳлелле каймаллине ыйтса пĕлсен, çав парахутсенĕн кантурки патне пытăмăр. Увăн умĕнђе парахут мĕн тăннине курмасан, унта çӳрекен çынсенђен—„кĕсенĕн парахуђĕ пайан çӳлелле кайатши?“ тесе, ыйтса пĕлтĕмĕр.—„Çӳлелле кайакан парахуђĕ килмен халĕ“, терĕçĕ, пире хирĕç. Пирĕн хыçран пристăн патне, пирĕн пек, ларса кайас текенсем пухăннăçемĕн пухăна пуçларĕçĕ; пĕ-

тес ҫук ҫынсем пухӑнҫӗҫӗ. Кантуркӑ ҫинҫе тӑвӑр та пула пуҫларӗ. Нумай та тӑмарӗ, айалтан пӗр парахут киле пуҫласан, ӑна курсан, пурте савӑнҫӗҫӗ, пилетсем иле пуҫларӗҫӗ. Харкам хӑй йапалисене майлаштарса хура пуҫларӗҫӗ. Парахут ҫывӑхарнӑҫемӗн ҫынсем хӗвӗше пуҫларӗҫӗ. Ҫынсем пилетсем илнине курсан, епир те йулташпа иксӗмӗр хамӑра валли пӗрер пилет илтӗмӗр. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, хай килекен парахут ҫывӑхара пуҫласан, пит хытӑ кӑна ҫухӑртса йарса сасӑ паҫӗ. Унҫен те пулмарӗ хӑйхи лап! лап! лап! лап! тутарса, темӗн пысӑкӗш хумсем кӑларса, ҫасах ишсе те ҫитрӗ. Епир тӑракан кантурка тытӑнҫӗ каллӗ маллӗ суллантарма. Кантурки ҫумне йеррипенӗн кӑна пырса ҫарӑнсан, каҫма хурсан, хай килнӗ парахут ӑшӗнҫен тытӑнҫӗҫӗ ҫынсем капӑртатса тухмашкӑн. Тухаканнинҫен-пӗр пилеҫӗсене калле ыйтса иле пуҫларӗҫӗ. Ҫынсем пӑртак сирӗлсен, вӗсем хыҫӗнҫен кантуркӑ ҫинҫе кӗтсе тӑракансем, кӗрес текеннисем, тытӑнҫӗҫӗ парахут ӑшне ӑшаланса кӗме. Вӗсем хыҫӗнҫен епир те парахут ӑшне ҫынсемпе пӗрле хӗсӗнкелесе тӗрткелешсе кӗрсе кайрӑмӑр. Пӑхӑсӑн, унта пӗтес ҫук ҫын, лӑк тулнӑ, ниҫта ларма, ниҫта тӑма,

вырӑн ҫук. Лармалли саксем ҫине кӑна мар, урайӗнҫе те пӗтес ҫук ҫынсем тӑсӑлса выртпӑ. Тӗрлӗ йапаласем тӳсе тултарнӑ. Епир халитҫен парахут ҫинҫе ларса ҫӳремен ҫынсем ниҫта ларма пӗлместӗпӗр. Ҫынсем хыҫӗнҫен унтата кунта та утатпӑр. Халитҫен ун пек йапала ҫинҫе ҫӳременсем, пуринҫен те тӗлӗнсе пӑхкаласа ҫӳретпӗр. Кӗленҫе витӗр парахут тӗпӗнҫе машшини те курӑнса тӑрат. Вӗри йапалисем ҫашӑлтатса вӗресе тӑраҫҫӗ. Пӗр айаккинҫен ҫӳлелле улӑхса каймалли пусмине те куратпӑр. Унта пирӗя пилет пеккисене улӑхма йурамас иккен. Мӗн ҫухлӗтӗр, тӑрсан, хай парахутӑмӑр тата пит хытӑ кӑна ӗкӗрсе йаҫӗҫке! Сасси таҫта шӑтӑка илтӗнҫӗ пулӗ!... Нумай та вӑхӑт иртмерӗ тата тепӗр хут та, паҫӑрхи пек, ҫухӑрса илҫӗ. Калӑн, темӗн пулӗ, тесе. Парахут ҫинҫи ҫынсем ҫупкалаша пуҫларӗҫӗ. Парахутпа илсе каймалли йапаласене тытӑнҫӗҫӗ хыпаланса тултма. Ентӗ тултрӗҫ, тултрӗҫ, йепле кӑна парахуҫӗ йӑтса тӑратши?!.. Ӑшӗнҫе лӑк тулли ҫын, лӑк тулли тавар, курӑсӑн, пурлакӗсем унӗҫемӗн хыпаланса тултаҫҫӗ. Парахут ҫине ҫынсем те кӗми пула пуҫласан, илсе каймалли йапалисене те тултса пӗтерсен, хай парахутӑмӑр тата хытӑ

урӑм-сурӑм, питӗ хытӑ, шӑхӑртса илҫӗ. Ку виҫҫӗмӗш пулҫӗ куран, матрусӗсем хыпалана пуҫларӗҫӗ, каҫмалливе туртса илсе, вӑл вырӑна пӳлсе хуҫӗҫӗ. Хай парахутӑмӑр тӑнӑ ҫӗртен, йеррипе кӑна хускалса, хӑпса кайрӗ те, тытӑнҫӗ каллех лаплаттарма. Кантуркӑмӑр тӑрса йулҫӗ. Парахут ҫинҫи ҫынсем кантурка ҫинҫи ҫыннисене картусӗсене илсе, пуҫҫапа пуҫларӗҫӗ, хӑшӗ тата аллинҫи тутӑрӗсемпе сӗлтет, мӗн тӑват. Парахутӑмӑр пӗр саманта таҫта ҫитрӗ, тытӑнҫӗ Атӑл тӑрӑх мӗн пур вӑйӗпе ишме. Епир те пӗр кӗтессе хӗсӗнсе лартӑмӑр. Хӑш ҫухне тата ура ҫине тӑрса ытараймасӑр ҫӳреҫисем витӗр пӑхса пыратпӑр. Пӑхса пынӑҫемӗн ытарма хал ҫук. Ҫурхи уйар кун, ҫап ҫутӑ, пӗтӗм тӗнҫе савӑнса тӑрат пек. Атӑлӑн икӗ йенӗ те кулса тӑнӑ пек курӑнат. Епир халитҫен Атӑлпа ҫӳремен ҫынсем, шарт тӗлӗнтӗмӗр: пур иккен тӗнҫере те илемлӗ вырӑнсем! Хамӑр савӑннипе нимӗн тума пӗлместӗпӗр. Парахут ҫинҫи ҫынсем, ларса пынӑ ҫухне хӑшӗ ҫийеҫҫӗ, хӑшӗ ҫей ӗҫеҫҫӗ, хӑшӗ мӗн тӑваҫҫӗ тӗр. Хӑшне кӑна пӑх, вӑл мӗнте пулин тӑват. Ыттах ӑйха йуратаканнисем харӑлтаттараҫҫӗ кӑна.... Калӑн парахута вӗсем харӑлтатнипе ыткӑнса пырат тесе.

Ҫынсем ҫиннине курсан, пирӗн те ҫийес киле пуҫларӗ, ҭӗре тӳсме хал ҫук, выҫса кайрӗ. Ҫул ҫинҭе ҫиме кирлӗ пуласса пӗлмесӗр, епир хамӑрпа пӗрле нимӗн те илмерӗмӗр. Пынӑҫемӗн тата питрех ҫийес киле пуҫларӗ. Парахут ҭарӑннӑ ҫӗрте ҫимелли йапаласем тухса илме епир пӗлмерӗмӗр. Хамӑр тек ларса пыратпӑр. Пирӗнпе пӗрле ларса пыракансем хӑшӗ мӗн ыйтат, ӑна ҫав йапалине леҫҫе параҫҫӗ: ҭей ыйтакана, ҭейне, ҫиме ыйтакана, трахтирти пек, ҫимеллисене те ҭасах леҫҫе параҫҫӗ. Ҫиме ыйтакансем малтан мӗн пӗҫерттермеллине прейскурантне ыйтса илсе пӑхкалаҫҫӗ. — „Акӑ ҫакна парӑр“, тесе, ыйтаҫҫӗ. Йулташпа епир те иксӗмӗр шухӑшлатпӑр: „аҭа епир те пӗр-пӗр йапала ыйтса ҫийер?“ тесе.

„Аҭа“, тет выҫӑхнӑ йулташӑм та. Прейскурантне алла илсен, пӑхкалатпӑр. Ҫырӑва вӗреннӗ ҫынсем, вулатпӑр. Парахут ҫинҭе йепле ҫимесем пӗҫерсе ҫитерпине пӗлтӗмӗр. Епир те канҭитат пулнӑскерсем „аҭӑр пӗр-пӗр йапала пӗҫерттерер?“ тетпӗр, иксӗмӗр калаҫҫа. Штисене епир ӑна шкулӑра та пайтах ҫинӗ, тесе, тиркетпӗр. Ҫинӗ-ҫинӗ исмаса пӗр-пӗр урӑх тӗрлӗ ҫимӗҫсене ҫисе пӑхар, тесе, малалла вулатпӑр. Хаклисене вӗсем пит хаклӑ,

тесе, ыйтма тумастăпăр. Хамăр йалан йӳнереххисене astăватпăр. Çимисенĕн йаҫĕсене вуласа пĕлсен те вĕсем йепле çимесем иккенне пĕлместĕпĕр. Ун пек çимесене çиме мар, епир ун пеккисенĕн йаҫĕсене те илтмен, пĕлмен. Пĕр çимийĕн йатне, йӳнерехине „буттер-брот“, тенĕ.—„Аҫа çакна ыйтса илер?“ тет йулташăм та. Вăл мĕн йапалине хамăр та пĕлместĕпĕр. Çимесем мĕнсем леççе паракан лаккейне хамăр патра ҫĕнсе илсе.—„Пире çакна кӳрсе пар халĕ?“ тетпĕр.—„Йурĕ“, терĕ те пирĕн патăмăртан утса кайрĕ. Епир иксĕмĕрте пулас учителсем, кĕренсе тухнă çынсем, темĕн тĕрлĕ савăнтăмăр. Парахут çинҫи йашкасене çисе пăхар халĕ, тесе, кулкаласа калаççа ыратпăр, мĕн тăватпăр. Пиртен инçе мар ларакансем те, ҫипертерех тумланнă çынсем, ĕçеççĕ, çийеççĕ, кулаççĕ, калаçаççĕ. Вĕсем ырăсла мĕн калаçнине епир пур сăмахĕсене те ăнланса, пĕлсе ыратпăр. Епир ҫăвашла мĕн калаçнине вĕсем пĕр сăмах та ăнланаймасăр ыраççĕ. Хайхи çиме леççе параканни, ҫасах пирĕн патра мĕн ыйтнине „буттер-брот“ теннине кӳрсе те паҫĕ. Ку халĕ шӳрпине мĕнне ĕлкĕрсен тин кӳрсе парат пулĕ, тесе. çимесĕр пăхкаласа ларатпăр. Пирĕн умра та-

рилке çинҫе пӗҫӗкçеççӗ татӑксем, каскаласа хунӑ. Унта кулаç татӑкӗсем, темӗн те пӗр каскаласа хунӑ. Кӳрсе паннине çимесӗр ларнине курсан, кӳршӗсем те пиртен вӑрттӑн кулам пек, пулаççӗ. Епир çиме хӑймасӑр ларнӑ пек, тек пӑхкаласа ларатпӑр. Темӗнҫен çимесӗр ларсан, ларсан, хай леш çиме кӳрсе параканни пыннине курсан, епир унтан—„мӗшӗн пире буттер-брот памастӑн?“ тесе, ыйтатпӑр.—„Кӳрсе патӑм-çке, мӗшӗн çиместӗр? Епӗ ӑна сӗтел çине пырса лартнине, сирӗншӗн леççе патӑм, çийӗр!“ тет. Апла каласан, епирте—„çимемӗр çакӑ анҫахтӑр, аҭа еппин çисе пӑхар,“ тетпӗр. Тытӑнтӑмӑр çиме. Пӗр татӑкне епӗ илтӗм, тепӗрне йулташӑм. Çисе пӑхатпӑр. Темӗскер, супӑн катӑкӗ пек, тутлӑ мар йапала. Хӑй шӑшлӑ, çиме хаљ çук. Кулаç татӑкӗсене çийетпӗр йуратса. Супӑн катӑкӗ пеккисене, çӳп-çӳхе каса каса хуннисене, тутлӑ мартан, çавартан кӑларса, кӗсйене ҫикетпӗр. Тула кайсан, шыва ывӑтӑпӑр, тетпӗр, калаççа. Пире хирӗç ларакансем епир çапла хӑтланнине курсан, пиртен вӑрттӑн кула пуçларӗçӗ. Аш татӑкӗ пеккисене хыпса пӑхатпӑр, вӗсем те кӑмӑла килмеççӗ, тепле хӑстарма пӑхса тӑраççӗ. Тата тепӗр йышшине

тултармӑш пек йапалана каса-каса хунӑ, хӑйсене ҫулӑ ашсенҭен тунӑ пулас, шӑн-ҫу татӑкӗсем курӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсене те ҫисе пӑхрӑмӑр. Пӗр-и пӗр кӑмӑла килмес. Нимӗн ҫиме.... Кулаҫ татӑкӗсем те пит сахал, епир мар, ҭӗппе ҫитерсен, ҭӗпӗ те тӑранас ҫук... Пире иксӗмӗре ҫиме пырса лартрӗ. Аш татӑкӗсене, тултармӑш татӑкӗ пек, ҫаврака йапаласене, ҫупӑн катӑкӗ пеккисене, тытӑнтӑмӑр кӗсйесене тултарма.... Парахут ҫинҭи ҫиме пире пӗртте кӑмӑла килмерӗ, тӑранаймарӑмӑр та. Лаккейне ҭей пама хушрӑмӑр. Ҭейе йепле ӗҫмеллине епир пӗлетпӗр, тетпӗр кулса. Лешӗ ҭейне те ҭасах кӳрсе паҭӗ. Тытӑнтӑмӑр васкамасӑр кӑна ҭей ӗҫме. Наҭар ҫиме хыҫҫӑн пулсан та ҭейне ҫителӗклӗ ӗҫрӗмӗр. Темиҫе ҭейник вӗри шывне кӳрсе паҭӗ, мӗскӗн, шывне тулта тулта та ывӑнҭӗ пулас. Тутарсем пек, тӑранитҭен кӑна мар, кӳпӗнитҭен ӗҫрӗмӗр.... Епир ҫапла нумай ӗҫнине курсан, кӳршӗсем те пиртен пӑртак тӗлӗнҭӗҫ пулас:—„лайӑх ҫиме хыҫҫӑн ҭей ӗҫӗнет ҫав“, тесе, калаҫҫа кулаҫҫӗ. Ӗҫҫе ҫинӗшӗн укҫа тӳлесен, ӳсӗр ҫынсем пек, калаҫҫа пыра пуҫларӑмӑр. Епир йут ҭӗлхене калаҫнине илтсен,—„есир камсем пулатӑр?“ тесе, ыйтри, пӗри. Епир те ӑна хирӗҫ: „канҭи-

татсем пулатпӑр“, терӗмӗр вырӑсла. Епир ҫапла каласан, лешсем тен ӑнланаймарӗҫи? Урӑх ҫӑмах мӗн ыйтмарӗҫӗ. Парахут ҫинҫе ларса пыннипе епир ҫул тӑрӑх савӑнса калаҫҫа пыратпӑр: хамӑр йепле вӗренни ҫинҫен, малашне йепле пурӑнасси ҫинҫен. Пӑртак укҫа тусанах, авланма шухӑшлатпӑр. Кама катҫа илесси ҫинҫен калаҫатпӑр. Хӑшӗ илемлине, хӑшӗ кӑмӑла килнине,—„сана вӑл йепле пек, туйӑнат?“ тесе, пӗр пӗринҫен ыйтса пӗлетпӗр. Епир мӗн ҫинҫен калаҫҫа пыннине йунашар ларса пыраканнисем ӑнланаймаҫҫӗ куран. Пирӗнпе хутшӑнса калаҫмаҫҫӗ; унтан пире пит лайӑх пулҫӗ. Кӗсйене тултарнӑ ҫимесене: сыр татӑкӗсене, вѣтчина татӑкӗсене, колбасы татӑкӗсене, тула тухма кайсан, кирли вӗсене шыва ыватма.... Ҫукшӑн укҫана сайа йатӑмӑр, тетпӗр, кулса. Ку йапаласем пирӗн ҫимӗҫсем пулмарӗҫӗ, пулӑ ҫимисем пулҫӗҫӗ, тетпӗр.... Парахутӑмӑр пырат ӑшаланса, наҫар пыраканнисене хӑваласа ҫитсе, иртсе кайат, таҫта пӑрахса хӑварат, курӑнми те пулаҫҫӗ. Мӗн ҫухлӗ парахутсем хирӗҫ пулҫӗҫ пулӗ? Пӗрпӗринпе тӗл пула пуҫласанах иккӗш те пӗрне-пӗри сасӑ параҫҫӗ, хӑш йенҫен иртсе каймаллине йалавпа сулласа кӑтартаҫҫӗ. Атӑл

çинҫе миçе тĕрлĕ кимĕсем, сулăсем, ишеççĕ-тĕр, пĕтес те çук.... Миçе пристăна çитсе курсă-тăмăр пулас. Çапла пыра-пыра Тетҫе те Хусана та çитрĕмĕр. Тепĕр кунне Шупашкар хулине те пырса çитрĕмĕр. Парахут пристăн умне ҫарăнсан, епир те парахут ăшĕнҫен тухрăмăр, алăри пилете ыйтса илсе йулҫĕçĕ. Шупашкар хулине йеплине пăхкала пуçларăмăр; хай тухтăра ăçта пурăннине ыйтса пĕле пуçларăмăр. Шупашкар хулинҫе пĕтес çук ҫăвашсем çӳреççĕ, ҫăвашла калаçаççĕ, вĕсене курсан, епир те темĕн тĕрлĕ савăнтăмăр. Ытараймасăр калаçатпăр.—„Есир ăçтисем?“ тесе, пиртен ыйтаççĕ. Епир хамăр ăçтисемне, йепле ыносемне, мĕн тума Шупашкар хулине пыннине каласа паратпăр.—„Тухтăра ăçта пурăннине пĕлместре?“ тесе, ыйтса пĕлетпĕр. Вĕсем пире ăçта пурăннине каласа паҫĕçĕ. Шупашкар хулинҫе çӳренĕ ҫухне ҫăваш хулинҫе çӳренĕ пек, туйăнат. Хули лăпкă, çыннисем йăваш, хули урамĕсенҫе хур-кăвакалсем, сыснасем çӳреççĕ. Хулинҫе пĕтес çук ҫул çуртсем, ҫул ҫиркӳсем. Пысăк çурҫĕсене курсан —„вăл кам çурҫĕ?“ тесе, ыйтсан,—„ҫăвашсенĕн“, тесе, каласа параççĕ. Пуйанĕсем те хулинҫе ҫăвашсем анҫах иккен.

Аван ҫиркӳне, ҫӳллине курсан, авантан тӗлӗнетпӗр.—„Ку ҫиркӗве пуйан ҫӗвашсем туса лартнӑ“, тесе, каласа параҫҫӗ. Вӗсем ҫапла ҫӑвашсем тунӑ тесен, ей пирӗн ҫун савӑнат-ҫке. Пирӗн ҫӑвашсем, те ҫиркӳсем тутарма пӗлеҫҫӗ тетпӗр, тӗлӗнсе. Шупашкар. хули Атӑл хрринҫе, сӑмсипе Атӑла пӑхса ларат иккен, йӑри тавра ту. Хули васамра ларат. Пӗтес ҫук ҫиркӳсем курӑнса тӑраҫҫӗ. Уйасни хула пулсанта пит ӗлккен иккен. Пуйан хуҫасем пурӑнаҫҫӗ, тырӑ илеҫҫӗ. Хула урамӗсемпе пырсан, пырсан, хай тухтӑр ҫӳртне те шыраса тупрӑмӑр.

Тухтӑр хӑваттирне кӗрсен, хамӑрпа илсе пынӑ ҫырӑва ӑна тыттартӑмӑр. Вуласа пӑхсан, вӑл пире хӑй пӳлӗмне ҫӗнсе кӳртрӗ, пирӗнпе паллашсан, савӑннӑ пек пулса, кулкаласа калаҫа пуҫларӗ, пире тенкелсем ҫине ларма хушрӗ. Ҫасах ҫыннисене сӑмавар лартма хушрӗ. Епир мӗн ӗҫпе пыннине каласа патӑмӑр. Хамӑрпа илсе пынӑ ҫырӑва вуласа пӑхсан, савӑнҫӗ куран:—„ҫӑвашсене ун пек кӗнеке кирлӗ ҫав“, терӗ. Епир унпа нумай йапаласем ҫинҫен калаҫрӑмӑр. Сӑмаварӗ ӗлкӗрсен, пире ҫей ӗҫме тепӗр пӳлӗмне ҫӗнсе, илсе кайрӗ. Епир те пысӑк ӗҫпе пынӑ ҫынсем пек, савӑн-

ԑа хӑна пулса, ҫей ӗҫҫе ларатпӑр. Хамӑра пулсан, епир вӗренсе тухнӑ ҫынсем, малашне ҫынсене ҫырӑва вӗрентмелле пулса тӑтӑмӑр. Тухтӑр та ҫӑвашсем хушшинҫе пурӑнакансккер —„ҫӑвашсене ҫыруран пуҫне тата тасарах пурӑнма вӗрентес пулат. Ҫӑвашсем куҫа-пуҫа таса тытмаҫҫӗ, ҫавӑнпа сирӗн хушшӑрта куҫа наҫар ҫынсем нумай. Куҫӗсене таса алӑ шӑлли пе шӑлмаҫҫӗ; ҫавӑнпа куҫ ҫирӗ сирӗн хушшӑрта пит нумай. Есир хӑр ҫыннӑрсене ӳкетлесе каласан, вӗсем сире шанӑҫӗ. Ӳлмӗрен хаҫхи пек, суккӑррисем нумай пулмӗҫӗ. Малашне ҫӑвашсем хӑйсем те ҫапла пирӗн пек ҫырӑва вӗренсе тухтӑрсем пулӗҫӗ“, тет. Епир ҫамрӑк ҫынсем вӑл мӗн каланнине темӗн пек итлесе ларатпӑр. Ҫей ӗҫҫе тӑрансан, тухтӑр капинетне кӗрсе ларсан, мӗн ӗҫпе пынӑ ӗҫе тӑва пуҫларӑмӑр. Ҫӑвашла куҫарнӑ кӗнекене пире вулама хушрӗ. Манӑн йулташӑм тытӑнҫӗ вулама. Вӑл итлесе лара пуҫларӗ. Кӑмӑлне килмен ҫӗрӗсене тӳрлеттерет, мӗн тӑват. Хӑй ҫӑвашла та пит ӑста иккен, пит лайӑх ӑнланат. Епир кӑнтӑрлатҫен ун патӗнҫе ҫапла вуласа муталашса лартӑмӑр. Пирӗн ҫийесте киле пуҫларӗ, 12 сехет ҫитрӗ; епир ҫав вӑхӑтра ҫиме вӗреннӗскерсем, ахалте тимиҫӗ кун

ӗретлӗрех ҫименскерсем, ҫиперех выҫӑха пуҫларӑмӑр. Вӗсем патӗнҫе ҫей анҫах ӗҫрӗмӗр. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн иртет, тепле ҫийес килсенте ҫын патӗнҫе ыйтса илейместӗн, тӳсетӗн, епир те ҫапла ирӗксӗр те пулин тӳсетпӗр. Парахут ҫинҫе ҫинни пирӗн вырӑна пымарӗ курӑн.... Кӑнтӑрла иртсен, пӗр сехет те, икӗ сехет те, ҫитрӗ, пирӗ ҫиме ҫӗнмеҫҫӗ. Виҫ сехет те ҫитрӗ. Пирӗн ҫипӗрех хырӑмсем выҫрӗҫӗ. Ӗмӗр ҫимен пек, ӑш ыйтнӑҫемӗн ыйта пуҫларӗ.... Те пирӗн ҫийес килнине пӗлсе, тухтӑр апат ҫитерме хушрӗ. Вӑл апла каласан, епир те савӑнтӑмӑр-ҫке... Тытӗнҫӗҫӗ тарилкесемпе, кашӑксемпе, ҫӗҫҫисемпе шалтӑртаттарма. Апат ҫиме хатӗрле пуҫланнине илтсен, епир те, пӗҫӗкҫӗ аҫасем пек, савӑнтӑмӑр. Сӗтел ҫине хатӗрлесен, пире те ҫиме ҫӗнҫӗҫӗ. Ҫийекен пӳлӗмпе кӗрсен, епир шарт! тӗлӗнтӗмӗр. Темӗн пысӑкӗш сӗтеле йӑри тавра ҫынсем лӑках ларса тулнӑ. Тухтӑр пире вӗсемпе паллаштара пуҫларӗ. — „Ку арӑм, кӗсем манӑн аҫамсем, аккусем пирӗн хӑнасем“, тесе. Пуринпе те алӑ тытса паллашнӑ йӑла турӑмӑр. Пире сӗтел хушшине хӑнисемпе пӗрле ҫиме ларма хушрӗҫӗ. Хатӗрлесе хунӑ тенкелсем ҫине епир йунашар лартӑмӑр. Пурсӑ-

мăрта ларсан, тухтăр арăмĕ пирĕн çийе пăхса илҫĕ те,—„пурне те вырăн пулҫĕ и?“ тесе, ыйтрĕ.—„Пурнете“, терĕ, упăшки те. Тухтăр арăмĕ тытăнҫе тарилкесем çине шўрпе тултарса, кашнине, йĕркерен пама. Кашни умне пĕрер тарилке тултарса лартсан, çиме хушрĕ. Ҫăхăсем пуснă пулас, йашки каснă салма, лапша пĕçернĕ. Çулă шўрпи пăсне кăлармасăр тăрат, калăн, сивĕ йашка лартнă, тесе. Пурсăмăра та çиме хатĕрлесе хунă кĕмĕл кашăксем, çийекен тимĕр сенĕксем, çĕçĕсем. Пĕҫĕкçеççĕ тарилки çине пĕҫĕкçеççĕ çăкăр татăкĕ касса хунă, çиме хатĕрленĕ. Çийĕр тесен, пурте кашăксем илсе, çиме тытăнҫĕçĕ. Епэр те йулташпа йунашар ларнăскерсем, выçăхнă йапаласем, тытăнтăмăр вĕсемпе пĕрле çиме. Йашка вĕри текелесе калаçнине илтсен, епĕ малтан кашăк илсе, тиркĕ çинҫи йашкама, сивĕнтĕр, тесе, пăтрата пуçларăм. Пĕрик-виç тапхăр çавăрса илсен, йашкам сивĕнҫĕтĕр, тесе, кашăк тулли ăсса илсе, çăвара хыпрăм. Ентĕ йашки те кашăкĕ те темĕн тĕрлĕ вĕри йапаласем çăвара пĕçерсе пăрахрĕç-çке!.... çăвара хыпнă йашкама, ни çăтса йараймастăп, ни кăларса сураймастăп. Темĕн тĕрлĕ пĕçерсен те тепле масарла çăтса йатăм.

Куҫран куҫ ҫӳллисем сиксе тухрӗҫ-ҫке!... Нимӗн тума пӗлместӗп... Пурте ман ҫийе ҫӑрр пӑха пуҫларӗҫӗ. Епӗ аран сывлӑша ҫавӑрса илтӗм. Куҫ ҫӳллисене шӑлатӑп.—„Сана мӗн пулҫӗ?“ тет, тухтӑр та хӑраса. Епӗ ӑна хирӗҫ нимӗн калаймастӑп. Ҫӑвар хӗррисем вӗри кӗмӗл кашӑкран пиҫнипе хӑпӑнҫӗҫ кайрӗҫ...

— Пӗҫерттертӗм, тетӗп, вӑтанкаласа.

— Епӗ пырна лартрӑн пулӗ, тесе, хӑрарӑм, тет.

Тухтӑрӑн хӑнисем, ҫамрӑккисем, манран кулса та илҫӗҫ пуласс.

— Йашкамӑр пит вӗри. Пӑртак сивӗтес пулатҫӗ, тет, тухтӑрӗ те арӑмне.

— Епӗ халӗ те сивӗнтӗр, тесе, темӗнҫен сӗтел ҫине лартмасӑр тӑтӑм, тепле пӗртте сивӗне пӗлмерӗ, тет.

— Ҫулӑран пит вӗри, тет тепӗр арӑмӗ те хуҫи арӑмӗ майлӑ пулса.

— Васкамасӑр ҫийӗр, тет тухтӑр арӑмӗ, аҫисем ҫине пӑхса, йашкамӑр пит вӗри, тет.

Епир, выҫӑхнӑскерсем, тӗл пулнӑ ҫухне васкарах хыпнӑ куран.... Хӑпаланнӑ тута татӑкӗсем, тута ҫинҫе каснӑ салмапа пӗрле ҫӑвӑра кӗре пуҫларӗҫӗ. Малтан пӗлмесӗр тута ҫинҫе каснӑ салма ҫаканса тӑраттӑр, тесе,

вёсене ҫăвара шăлса кÿртетĕп. Пăхăсăн, вĕсем ҫăвара кĕмеҫҫĕ.... Тута ÿҙĕсем, пиҫнисем, татăлса ÿкмен иккен.

Иулташăм та ҫинĕ ҙухне сулмаклă кĕмĕл кашăкпа ҫăварне хыпнă ҙух, ăнсăртран шăлне шанк! тутарҙĕ. Пăртакҫех катса пăрахмарĕ пулас. Унтан та кула пуҫларĕҫĕ. Епир йывăҫ кашăкпа ҫиме вĕреннĕскерсем, кĕмĕл кашăкпа ҫинĕ ҙухне йулташăм йашкана сыпма хăтланса, шÿрпине хăй ҫине тăкса йаҙĕ. Унтан та лешсем тата вăрттăн кула пуҫларĕҫĕ. Пирĕн унĕсемĕн алăсем ҫыхланаҫҫĕ. Пĕр тиркĕ йашкине ҫисе пĕтерсен, тата тепĕр тĕслине каклетсене кÿрсе лартрĕҫĕ. Кашни умне тарилке ҫине пĕрер каклитне хурса паҙĕҫĕ. Ăна та ҫиме хушрĕҫĕ. Тытăнтăмăр каллех ҫаплă тепĕр тĕрлĕ ҫимĕҫне ҫиме. Хамăр пайа епир ҙасах ҫисе йатăмăр—„тăта тепĕр татăк хурса парами?" тесе, ыйтрĕ, тухтăр арăмĕ. Хамăрăн ҫийес те килет, епир ҙĕнместĕпĕр, тăрăннă пек пулса ларатпăр. Пурте ҫисе пĕтерсен, тата виҫҫĕмĕшне мĕнтĕр кÿрсе лартрĕҫĕ. Пĕр савăт ҫинҙе темĕскер йапала, кĕсел пек, ҙĕтĕресе тăрат. Ҫав ҫимине тухтăр арăмĕ хăнисене ҫемйисене кашнине илме хушрĕ. Малтан хĕр-арăмсем пĕрер кашăк ката ката илее,

хăйсем тарилки çине хуҫĕçĕ. Унтан пире те илме хушрĕçĕ. Манăн йулташăм та хăне ĕрет ҫитсен, илме хушсан, тытăнҫĕ çав йапалана пĕҫĕкçеççĕ кĕмĕл кашăкпа катса илме. Пĕр катăк касса илсен, хăй тарилки çине хурас тенĕ ҫухне, хай йапали кашăкĕ çинҫен сĕтел çине лап! туса ӳкрĕ. Тытăнҫе хыпаланса кашăкĕпе илме. Пăхăсăн, нийеплете ăсса илеймес. Унпа ҫăлт шурă сĕтел çиттине варласа пăрахрĕ. Ыттисем унтан кула пуçларĕçĕ.... Ку ман йулташăм кашăкĕпе нийепле те илеймесен, кашăкне сĕтел çине хуҫĕ те, кирли икĕ аллипе ывçăласа илсе, тытăнҫĕ аллисем çинҫен, йытă пек, çиме.... Вăл çапла ирсĕр хăтланнине курсан, хай ахаҫте вăрттăнлă мĕнлĕ кулакансем, тӳсеймесĕр тата хытă ахăлтатса кулса йаҫĕçĕ... Хăшĕ тата, тытăнҫĕçĕ, сĕтел хушшинҫен тухса тарма.... Епир те тухтăр арăмĕпе анҫах сĕтел хушшине ларса йултăмăр....—„Çамрăксем кулма йуратаççĕ", тет тухтăрта кулса. Хуçисем сĕтел хушшинҫен тăрса тухсан, епир те тухрăмăр. Хамăра темĕн пек намăс пулсан та манăн хам йулташăмран темĕн пек куласçăм килҫĕ.

Ҫей ĕçитҫен пире пăртак канма хушрĕçĕ. Хăнисем, çемйисем пурте таçта саланҫĕçĕ.

Епир йулташпа иксĕмĕр пĕр пӳлĕме кĕтĕмĕр те тенкелĕсем ҫине лартăмăр. Иксĕмĕр калаҫса ларатпăр:—„хамăр вĕреннĕ сынсем, хамăртан хамăр сынсене йепле култартăмăр, намăслă пултăмăр“, тетпĕр. Ҫитменнине тата хамăртан хамăр кула пуҫларăмăр. Тутамăрсене, ҫăвар ăшсене, кĕмĕл кашăкпа пĕҫерттерине аса илсен, йулташăм хăнҫен кула пуҫларĕ:—„епĕ те лешне, кĕсел пеккине, ăнсăртран сĕтел ҫитти ҫине ӳкерсе, сĕтел ҫиттине йепле варларăм.... Аптăранă йенне, ăна ывҫăласа илсе, йытă пек, ҫийе пуҫласа, йепле култартăм.... Пурте сĕтел хушшинҫен тӳсеймесĕр тухса тарҫĕҫĕ... Пĕр шухăшласан, хамăр та ҫисти амутке иккен.... Вĕреннĕ сынсем пулса пурăнатпăр! Хамăр ҫипер сынсемпе пĕрле ҫиме те пĕлместĕпĕр. Хамăртан йепле сынсене култартăмăр.... Вĕсем пиртен кулнине ĕмĕрне манас ҫук:—„ҫăвашсем йепле ҫийеҫҫĕ“, тесе, асăнса, темĕн пек, кулĕҫĕ, тетпĕр. Пăртак кансан, тухтăр пирĕн патра килсе, хай куҫарнă кĕнеке пирки калаҫа пуҫларĕ. Тытăнтăмăр ăна вулама. Каҫхи ҫейҫен вуларăмăр, тӳрлетмелли вырăнĕсене, тӳрлетрĕмĕр. Каллех пире ҫей ĕҫме тĕнҫĕҫĕ. Ҫей ĕҫме епир вĕреннĕ сынсем. Ăна епир сынсем пекех ĕҫрĕмĕр. Ҫей хыҫҫăн, епир

каллех ҫав хамӑр ӗҫе, тытӑнтӑмӑр вулама. Вуласа та тӳрлетсе те пӗтертӗмӗр.—„Ыран ирех киле кайӑпӑр“, тетпӗр.—„Кӑнтӑрлахи апата ҫисен, кайӑр“, терӗ, тухтӑр. Вӑл апла каласан, епир вуникӗ сехетре ҫиме вӗреннӗ ҫынсем, ҫав вӑхӑтра ҫисен, ҫасрах кайӑпӑр, тетпӗр. Вӑл вӑхӑтрах тухтӑрӑн хӑнисемпе ҫемйисем ҫиме лармасса пӗлсе.—„Ҫийес пулсан, пире кухнере ҫитерсен те йурӗ“, тетпӗр. Епир ыйтнӑ пек, 12 сехете апат хатӗрлесен, епир вара кухнинҫех апат ҫирӗмӗр.—„Ӗлӗк те ҫапла уйрӑм ҫийес иккен“, тетпӗр, иксӗмӗр, йеррипенӗн калаҫса. Тӑранитҫен ҫирӗмӗр те, ӗҫки-ҫикишӗн тухтӑрпа арӑмне тав турӑмӑр. Хамӑрпа пӗрле илсе каймалли йапаласене хатӗрлесен, тухтӑр пире 15 шер тенкӗ укҫа паҫӗ,—„пилӗкшер тенкӗ ҫул ҫине ҫӳреме, 10 шар тенкӗ кӗнекеме куҫарпӑшӑн, сире кутҫенеҫ паратӑп“, терӗ. Епир темӗн тӗрлӗ савӑнтӑмӑр. Укҫа панӑшӑн ӳксе пуҫҫапма хатӗрҫӗ.... Укҫа панӑран савӑнса,—„йепле епир куҫарни аван пек туйӑнати?“ терӗмӗр. Тухтӑр та пире хирӗҫ:—„куҫарни, мана пулсан, пымалла пек, анҫах ҫырӑва пӗлекен ҫӑвашсем те ӑнланайӗҫӗ, темӗн ҫав?.. Ыттах ӑнланайманнисем, вырӑслине вуласан, ӑнланӗҫӗ“, терӗ. Епир хамӑра пулсан, темӗн тӗрлӗ аван

куҫартӑмӑр, тесе, шухӑшлаттамӑр, ҫӗкленсе ҫӳреттӗмӗр. Тухтӑр ҫапла каласан, епир лӑпах пултӑмӑр....—„Есир киле кайнӑ ҫухне Хусан урлӑ кайӑр. Унта кӗрсен, семинарийе кӗрсе Ильминскийе курса тухӑр“, терӗ. Епир ун сӑмахне итлесе, унта кӗме те пултӑмӑр.—„Епӗ сире, ун патне кӗрессӗр пулсан, ҫыру ҫырса парӑп. Есир вара вӑл ҫырӑва ӑна кӳртсе парӑр. Вӑл пит аван старик. Сире, ҫӑвашсене, ҫӑвашла вӗрентерекенни ҫавӑ ӗнтӗ. Ӑна пула есир ҫапла лайӑх ҫынсем пултӑр.... Вӑл пӗр сире кӑна мар, ытти ҫынсене те ҫапла ырӑ тӑват. Хусан урлӑ иртнӗ ҫухне ӑна курса тухӑр“, терӗ. Ҫасах ларса, ҫыру ҫырса, пире паҫӗ. Пӗтӗмпе пуҫтарӑнсан, пурне те сыв пулӑр, тесен, алӑ тытсан, иксӗмӗр те вӗсем, патӗнҫен тухса, Атӑл хӗррине, пристӑн патне антӑмӑр. Епир ҫитес уммӗн кӑна пӗр парахут кӑшт пырса ҫарӑнҫӗ. Ҫав парахут айалалла Хусаналла анат иккен. Епир пилетсем илсен, ҫав парахут ҫине кӗрсе лартӑмӑр. Шупашкар хулине ҫи йулашкинҫен пӑхса илтӗмӗр те епир ларнӑ парахут ҫасах пристӑн ҫумӗнҫен хӑпса кайса, айалалла ише пуҫларӗ. Шупашкар, хули курӑнми те пулҫӗ.

Парахут ҫинҫе епир ҫӑвашла калаҫса

пыракан икĕ ҫăваш аҫине куртăмăр.—„Есир ăҫтисем пулатăр?“ тесе, ыйтсан, вĕсем пире хирĕҫ:—„Епир ҫавăнтисем, аҫасене вĕрентекенсем пулатпăр“, терĕҫĕ. Епир те хамăр камсем иккенне вĕсене каласа патăмăр. Вĕсемпе епир ҫасах тус пултăмăр. Вĕсем Хусан та ҫырăва вĕреннĕ ҫынсем иккен. Ҫас ҫасах Хусана ҫӳренĕ ҫынсем. Епир вĕсене пăхнă ҫĕрте аҫасем анҫах, Хусана ĕмĕр курман ҫынсем. Вĕсем унта вĕренсе тухнине пĕлсен, пире вĕсемпе курса ҫӳреме питĕрех те лайăх пулĕ, тесе, тата та питрех вĕсемпе пĕрлештрĕмĕр. Вĕсем пире Хусана кăтартса ҫӳреме пулҫĕҫĕ. Ҫур ҫĕр вăхăтĕнҫе епир Хусана пырса ҫитрĕмĕр. Ĕлĕк семинарийе Ильминскій патне кĕрсе ҫĕр выртма шухăшланă ҫынсем, пĕлмен ҫĕре йепле ҫĕрле пырса кĕрес, вĕсене пысăк ҫынна ҫăрмантарасси лайăх мар, тесе, епир урăх ҫĕре кĕме пултăмăр. Пирĕн ҫĕнĕ йулташсем, Хусан та вĕренсе тухнă ҫынсем, епир пĕрле ҫĕр выртма нумĕре кĕрĕпĕр. Ирхĕне унта тул ҫутăлсан, пĕр вунă сехетре Ильминскій патне те кайăр. Атăр пирĕнпе пĕрле нумĕре, терĕҫĕ. Парахут ҫинҫен тухсан, епир вĕсемпе пĕрле утрăмăр Хусана ҫуран. Мĕскерле нумĕре тĕр. ҫитсен, выртма кĕтĕмĕр. Хакне 80 п. терĕҫĕ, Пире тăвата ҫынла 20 шер пус анҫах тивет,

йўн, тесе, кĕтĕмĕр выртма. Çуран пырса ывăннă сынсене пире çĕр каçма пит аван, ҫипер кăна ĕнтĕ канар, тетпĕр. Урайне сарса тăватсăмăр та çывăрма вырҭрăмăр.

Нумĕр те пĕр çур сехет те выртмарăмăр пулĕ. Пирĕн кўршĕри нумĕр те—„разбой!.... разбой!... караул!... караул!.... караул!....“ тесе, пит хытă кăшкăраша пуçларĕçĕ. Нумĕрти çынсем хăраса, сиксе туха пуçларĕçĕ.—„Мĕн пулҫĕ?“ тесе, шавлаша пуçларĕçĕ. Епир унта мĕн пулнине пĕлмесĕр, тухса пăхма хăраса тăратпăр....—„Городовойа, полицийе ҫĕнсе килĕр“, теççĕ. Пирĕн сехре хăпса тухрĕ:—„кĕсем пире çыхлантараççĕ“, тетпĕр, хăраса. Нимĕн тума пĕлместĕпĕр. Пĕр йулташăмăр калат:—„аҭăр кунтан тухса тарар?“ тет. Епир те тарма пултăмăр.—„Анҫах йепле тухса тарар?“.. Кĕнĕ çĕртен, тухса тарма хăратпăр: тытĕçĕ, тетпĕр. Ҫўреҫе витĕр унта кунта пăхкала пуçларăмăр. Çынсем çўреннисем курăнмаççĕ, урам çап çутă, епир кĕнĕ нумĕр патĕнҫе пĕр панар çулса тăрат.— „Аҭăр ҫўреҫе витĕр сиксе анса, тарар?“ тетпĕр Урамалла ҫўреҫе витĕр сиксе анма, пăртак хăрушă, çўлĕрех. Айалта ҫул сарнă, ўксен, аманасран хăратпăр. Каритурти çынсем шавланăçемĕн шавлаççĕ. Йулташсенҫен пĕрийĕн алă

шăллисем пур иккен, икĕ алăшăллийе пĕр çĕре çыхса, тепĕр вĕçне сĕтел уринҫен çыхрăмăр. Тытăнтăмăр, сат йенне ҫўреҫе витĕр алăшăлли тăрăх шуса анма. Малтан пĕри, унтан ыттисем те. Кайран анаканнине алăшăллисене салтса илтерсен, ăна йăтса антартăмăр. Сатран тухрăмăр та Атăл хĕррине кантуркă çинҫе çывăрăпăр, тесе, тара патăмăр.... çул çинҫе, пынă ҫухне, çаврăна-çаврăна пăхатпăр. Лешсем пирĕн хыçран ҫупмаççĕши? тесе, шухăшласа. Никам ҫупнине курмасан, хамăр тата хытă васкаса утатпăр-çке! Тепле ывăннă пулсан та ута-ута хайхисем Атăл хĕррине те çитрĕмĕр. Пĕр парахутăн кантурки çине кĕрсе, çĕр каçма турăмăр. Хамăр, йытăсем пек, ывăнтăмăр. Аран-аран çитрĕмĕр. Урасене шăйăрса пĕтертĕмĕр.... Кантурки ăшне кĕрсен, тин пăртак ҫунăмăрсем канҫĕçĕ. —„Кунта темĕн пулсанта выртса çĕр каçăпăр ĕнтĕ", тетпĕр.—„Лере йулнă пулсан, ҫăнласах пире çыхлантаратҫĕçĕ, халĕ те тухса тарма пĕлтĕмĕр. Ун сăрăн пĕтнĕ пулăттăмăр....", тетпĕр. Хăраннипе çĕр çывăраймастăпăр. Акă тата—„разбой! караул!" тесе, кăшкăрас пек, туйăнат. Турра шĕкĕр; кунта сасă ҫĕвĕ пулмарĕ Выртса çĕр каçрăмăр. Ирхĕне вунă сехетре каллех Хусана тухса утрăмăр. Атăл хĕррин-

ҫен Хусан хули пӗр улт-ҫиҫӗ ҫухрӑмра Хусана ҫитсен, семинарийе те шыраса тупрӑмӑр. Унта Ильминскийе те куртӑмӑр. Тухтӑр ҫырупе пана ҫухне унпа пӑртак калаҫрӑмӑр. Ҫӑнласах, Ильминскiй тенӗ ҫын аван йӑваш ҫын иккен, пирӗнпе пит йӑваш ҫемҫе калаҫрӗ. Хӑҫан вӗренсе тухнине ыйтса пӗлҫӗ. Ӑҫтисемне. Хусана ӗлӗк курнипе курманнине те ыйтса пӗнҫӗ. Вӑл тӑта та нумай ыйтса пӗлнӗ пулӗҫи тен? епир унпа пит хӑйса калаҫманнине кура ахӑр, ҫас ҫарӑнҫӗ.—„Есир кунта ҫухне Хусана курса ҫӳрӗр, ҫийессӗр килсен, кунта пирӗн семинарири кухнене кӗрсе ҫийӗр. Сире унта ыйтсан, парӗҫӗ. Епӗ вӗсене ҫитерме хушӑп, терӗ те пирӗн патӑмӑртан пӗр йенелле йеррипе кӑна утса кайрӗ. Пирӗнпе калаҫнӑран, епир тӗленсе йултӑмӑр.

Хусан та епир пӗр-икӗ кун курса пурӑнтӑмӑр. Ей Хусан пысӑкҫке!... Мӗн ҫухлӗ унта миҫӗтсем? Хӑш урамне кӑна пӑх, унта ҫиркӳ те миҫӗт. Мӗн пысӑкӗш унта ҫул ҫуртсем пур??... Ей хули, ытарма та хал ҫук-ҫке! Ахаҫ мар иккен пирӗн ҫӑвашсем Хусана мухтаса йурланни.... Хусана пӑхнӑ ҫӗрте пирӗн Ҫӗмпӗр хули уйасни хула пек анҫах. Пӗр-икӗ кунтан каллех Хусантан Ҫӗмпӗре парахутпа таврӑнтӑмӑр. *Ив. Юркин.*

И. Н. Юркин çырса кăларнă кĕнекесем:

1) Шўтсем. .	5 пус.	
2) Халлапсем.	5 „	
3) Йумахсем . .	5 „	
4) Ваттисенĕн сăмахĕсем .	5 „	
5) Калаçусем .	5 „	
6) Хăраман-скер. . .	15 пус.	
7) Урине . .	15 „	
8) Кулаçа тăранитђен çитерви . .	25 „	
9) Вĕреннĕ çынсем . . .	35 „	

Малтанхи пилĕк тĕрлĕ кĕнекесем сутăнса пĕтнĕ, кайранхисем пĕр çĕршер кĕнеке сутăнмасăр йулнă. „Вĕреннĕ çынсем“ халĕ кăна тухрĕçĕ (5 пин кĕнеке). Пуштă урлă çырса илес текенсенĕн, ак çаксене пит хытă пĕлсе тăрас пулат:

1) Малтан укçа йаман çынсене, ыйтсан та кĕнекесем йамастăпăр.

2) Çырусем çумне маркă çыпăçтарса йаман çырусене пуштăран илместĕпĕр.

3) Кĕнекесемшĕн укçа йанă ђухне кĕнекесем хакĕсенђен пуçне тата пуштă укçине те икĕ кĕрепенкешĕн йарăр.

4) Ыйтса илнĕ кĕнекесене ăçта йамаллине, хăрăн атĕрĕсре, ђипертерех, паллăрах çырса йарăр: п. отд. йатне, хăш кĕпĕрнине, уйасне, йалне, кам йатне йамаллине.

Çаккăнта каланă пек, мĕн кирлине çырсан, йанă кĕнекесем çухалмаççĕ.

Пустарма тытăнтăмăр вуннăмĕш кĕнекене **„Хулари кивĕ масар çинђе“**. Ђас тухĕ.

Кĕнекесем çырса-илес текенсене атĕрĕсĕм ак çапла: „г. Симбирск, площадь Марата (б. Ярмарочная), д. № 97 И. Н. Юркину“.